# Поэт автографĕ

Чăвашсемпе тутарсем мĕн ĕлĕкренпех кӳршĕллĕ пурăннă. Тутар республикинче, эпĕ çуралса ӳснĕ Элкей районĕнче, калăпăр, чăваш ялĕсем çине-çине тенĕ пекех тĕл пулаççĕ. Вĕсем хушшинчи Сиктĕрме (халĕ - Хусанкай, вырăсла - Хузангаево) ялĕ маншăн уйрăмах çывăх. Маншăн çеç-и? Кам чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн çынлăхлă та чунлăхлă сăвви-поэмине сума сăвать, çак яла чĕререн хисеплет, ма тесен Сиктĕрмен ешĕл арки çинче Раççейĕн пысăк поэчĕ ӳссе çитĕннĕ. Чăваш çыннин сапăр кăмăлне ытти халăхсем умне кăларас сăвăç ача чухне çакăнти çăлкуçсен сиплĕ шывне ĕçсе киленнĕ, çĕмĕртлĕхри шăпчăксен сассине итленĕ, Аптрамансен йăхĕпе те çакăнтах тĕл пулнă.

Эпĕ, юнашарти тутар ялĕнчи ача, Сиктĕрмене час-часах çӳреттĕм. Туссем, пĕлĕшсем пурччĕ унта ман. Аслă поэт сăвви-юрри вара чуна тата ытларах туртатчĕ, те хамăн та илемлĕ сăмах туйăмĕ вăранса пынăран, унăн йĕркисем мана çывăхчĕ, вĕсем ялан хăйсем патне йыхăратчĕç. Паллах, аллăмĕш çулсенче, эпĕ шкул ачи чухне, Петĕр Хусанкай ялта пурăнмастчĕ ĕнтĕ, анчах поэзи сывлăшĕ, кĕвĕлĕх туйăмĕ Сиктĕрмен кашни çыннинчех курăнса тăратчĕ. Ăна ман тантăшсем те аван пĕлетчĕç.

Вырăспа та тăванлаш,<br>
Тутарпа та эс туслаш,<br>
Пурте - пирĕн хурăнташ,<br>
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш...

Хăлхана ачашшăн лăпкакан çак йĕркесем нихçан та асăмран тухас çук.

«Ӳсерехпе тăванлăх туйăмĕ çĕнĕрен те çĕнĕ пайрăмсемпе çирĕпленсе пычĕ. Чăваш ялĕнче мана яланах килти пекех ырăччĕ,

чăваш каччисемпе ăмăртмалла вăйăсем выляттăмăр, чăваш пикисем пире çăл шывěпе хăналатчěç.

Хусанти университета вěренме кěрсен, эпě поэт пултарулăхěпе тата тěплěнрех паллашрăм, вăл чăвашпа тутар литературисен туслăхне çирěплетессишěн мěн тери вăй хунине тарăнраххăн ăнланма пуçларăм. Унăн тутар чěлхипе тухнă «Туссемпе пěрле» кěнеки алла кěрсен тем пекех хěпěртерěм. Кěнеки, чăнах та, туслăх кěнекиех. Сăввисен ячěсене çеç пăхăр-ха: «Эпир Российăра пурнатпăр», «Горкăри çуртра», «Тăван Тутарстана», «Хади Такташа», «Сиктěрме»... Поэт хăй Хусанта вěреннě çулсене ăшшăн аса илет, пирěн писательсене, Хади Такташпа Адель Кутуя, хăйěн юлташěсем тесе шутлать.

Сăмах май каласан, Такташăн чăваш тусě çинчен çырнă сăвă пур. «Мěнле çывăх эпир пěрне-пěри, - тет унта тутар поэчě. - Киле çитсенех аннене: «Мěншěн эсě хăвăн пěр ывăл çеç тесе шутлатăн, санăн икě ывăл, акă вăл, ман шăллăм, чăваш тусăм, эпě ăна пурнăç çулěнче тěл пултăм...» Халь çак сăвва вулатăп та – шухăша каятăп: Петěр Хусанкай çинчен çырман-ши Такташ?

1964 çулта Хусанта хыпар сарăлчě. «Петěр Хусанкай килнě», – теççě, пурте чăваш поэтне хисеплесе, юп курса калаçаççě. Студент таврашě ун пек çěрте яланах хăйне евěр пуçаруллă. Эпир Чăваш халăх поэтне хапăл тусах хамăр пата хăнана чěнтěмěр. Петр Петрович килěшрě, университета пычě. Сăвăçа хăйне курниех пирěн кăмăла çěклерě: ик куçěнче хавхалану хěлхемě ялкăшса тăрать, питěнче – çынна юлташла çывăх куракан ăшă кулă. Чылайччен калаçрăмăр, тем çине те çитрěмěр. Поэт вырăсла та, тутарла та, чăвашла та пěр пекех ăста калаçни те, унăн тěнчекурăмě шутсăр анлă пулни те тěлěнтерчě.

– Хусанта революцичченех чăваш хаçачě тухнă, пирěн тěп театр та кунтах йěркеленнě, эпě хам та тăван халăхăн историлле çул-йěрне кунта

ăнланса илтĕм, – терĕ поэт. Унтан Хусана халалланă сăввисене вуларĕ. Уçă та кăмăллă сасси паян кун та хăлхарах тăрать.

Тĕлпулу хыççăн, паллах, автограф пирки сăмах хускатрăмăр, поэт умне черете тăтăмăр. Хăйĕн ентешĕ пулнине кура Петр Петрович манпа ытларах калаçрĕ, Хусанта 1960 çулта тухнă кĕнекине парнелерĕ. Çав автограф маншăн халĕ темрен те хаклă. Акă мĕнле çырчĕ юратнă поэт: «Хаклă ентешĕме Шамиль Маннапова – поэзие юратакана, ырăшăн çунакана. Петĕр Хусанкай. 26.Х1–64 çул».

Миçе хутчен алла тытман пулĕ эпĕ аслă ентеш кĕнекине. Кашни тытмассерен вăл мана темĕнле çĕнĕлле асамлăхпа çĕклентерсе ярать. Тутарла та ун сăввисене эп юратакан поэтсем куçарнă: Хасан Туфан, Заки Нури, Шараф Мударрис, Ахмет Исхак, Салих Баттал...

Элкей районне эпĕ халĕ те кайкаласах тăратăп, Хусанкай ялне те кашнинчех кĕретĕп. Ку тăрăхра поэт ятне пысăк хисепре усраççĕ. «Салам, Петр Петрович», – тесе пуçа таятăп эпĕ аслă сăвăç урамĕпе иртнĕ чухне.

Шамиль Маннапов, тутар поэчĕ.